


1359
32-175

МИХ. ЂАМАЂ

# ХАВАСЛĂХ

(12—16 çулхи аЂасем ваЉЉи)

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ

ШУПАШКАР 1932

Отпеч. в типографии № 1
Чувашгиза, г. Чебоксары
Канашская, 16

# оКТАПЕР МАРШĔ.

— Пĕрре,
иккĕ,
виççĕ,
тăваттă!..
çĕнĕ маршăн каманти.
— Пĕрре,
иккĕ...
Епĕр паттăр,
партти пирĕн кăмантир.

Харăс,
харăс
çирĕп пусăр,
атăр, пусăр пĕр çĕре.
Ей, хаваслăн!
пуç ан усăр,
ылхан-нишлĕх йалт çĕрет.

Тĕл пулсассăн хавшак-нишлĕх,
тĕпĕнҫен йалт çĕнтерер.
Епĕр вăйлă, йышлă
кĕрешӳллĕ тĕнҫере...

— Пĕрре,
иккĕ,
виççĕ,
тăваттă...
Çĕнĕ маршăн каманти.

пĕрре,
иккĕ...
Епĕр паттăр,
Партти пирĕн кăмантир...

Ак, умра ман: йешĕл саслă
ереветлĕ паттăр йыш.
...Ђĕвĕл-ђĕвĕл сас хаваслӑ,
аслă, темĕн пысăккиш...

— Çулсем пирĕн çамрăк пулђђăр,—
çавах епĕр паттăрах.
Кам кулаť тăк, аťа култăр,
пирте вутлă вăй тăраť...

— Пĕрре,
иккĕ,
виççĕ,
тăваттă...
Çĕнĕ маршăн каманти.

— Пĕрре,
иккĕ...
Епĕр паттăр,
Партти пирĕн кăмантир...



Харӑс, харӑс ҫирӗп пусӑр,
Атӑр пусӑр пӗр ҫӗре!

* * *

Пионерăм, сан çинђен
Кĕвĕлетĕп йурă,
ђĕнтĕрлеп...
Ман пӳрнемçĕм
пас çинђе.
Хулăм сассăм,
сĕр-р
сĕрлет!..

Отретăм — кил,
ĕç — анне.
Çемйемĕр пирĕн — йышлă çар.
Çĕршывăн ђаплă тăванне
Парнеленнĕ епĕр, йышлăça.

Мĕлйун ђĕре, кăварлă çар,
хаљ епĕр йышлă вут аман.
Ĕçри мĕлйун хастарлă çав,
никам çĕнми вăл — утаман.
Йе ири, каçи...

— У-У, ан ђар,
Найанлăх, сирĕл хăвăртрах!..
Ĕçне те тунă,
ух, анђах
пĕр васкавлă вăхăтра...
— Ей, атсемĕр,
Ăмăртар.

Кам хастарлă—мала тух.
Çĕнтерӳллĕх хамăрта,
Аҭа,
çапăр мăлатук.
Нăйканă,
халсăр нăш-наша,
„Ах, пĕтрĕм,
вилтĕм“ тенине
Тымарпелех йăлт ашар,—
таптари хулăм çĕр айне.

Мĕлйун ҕĕре, кăварлă çар,
Ĕçри мĕлйун хастарлă çав,
никам çĕнми вăл—утаман.

Кам халĕ ĕççĕр нӳр кахал,
Унран ес ан кĕт пархатар...

Кĕрешӳрен хăран йăх-йăха
(Ан пултăр шăршĕ!)
аркатар.

Кĕрешӳллĕн тыт йата,
вут ҕĕремçĕм, йаланах.
Кĕрешӳллĕн тап татах,
Çĕнтерӳшĕн хаваслан...

Пионерăм, сан çинҕен
кĕвĕлетĕп йурӑ,
ҕĕнтĕрлеп...

Ман пӳрнемҫӗ

пас ҫинҫе.

Хулӑм сассӑм

сӗр-р

сӗрлет.

* * *

Пĕрре,
  иккĕ,
    виççĕ,
        марш!
Прикатă,
        тух мала.
Çĕнĕ тапхăр ĕçсĕр мар,—
Ĕçе харăс тухмалла.

Пĕрре,
  иккĕ,
    виççĕ,
        марш!
Тăшман йăхĕ тăлланаť.
Тăваттăрах тултарар
Пилĕкçуллăх плана.
Пĕрре,
  иккĕ,
    виççĕ,
        марш!
Çĕнтерӳлĕх—пирĕнте.
Ей,
  атсемĕр,
        тухăр кар;
  ушкăн вăйĕ—пирĕнте.
Пĕрре,
  иккĕ,



Пӗрре, иккӗ, виççӗ, марш!
Прикатă, тух мала.

виççĕ,

марш!

Прикатă,

тух мала!..

Çĕнĕ тапхăр ĕççĕр мар,

Ĕçе харăс тухмалла.

---

## супотнĕк йурри.

Пайан епĕр ир-ирех
Ĕçе тухнă,
Пĕр йăрансăр уй-хире
Вăйа пухнă.

Аслă хирĕн аслă йыш
Ереветлĕ.
Çĕнĕ хирĕн çĕнĕ тĕш
Шерепетлĕ.

Ĕлĕк пулнă парлаках...
Çинçе, ансăр.
Пайан—анлă, сарлака,
Пĕр йăрансăр...

— Кинемейĕм, тухса кур:
йепле епĕр
Ĕçре вăйлăн та саттур
Кĕрешетпĕр.

Ĕçри савăк ушкăна
Хĕрӳ патăр—
Вара ушкăн вăшкăнат
Прикатăн.
Ăмăртулăх уй-хирте
Ăмăртуллă.
Пире ĕçлĕх илĕртет,
Вăйă-кулă.

— Аттӑр, аттӑр ӑмӑртар...
— Камха паттӑр?!.
— Пултарулӑх хамӑрта,
Ӑмӑртатпӑр!

Йанкӑс тӑрӑ тӳпере
Хӗвел ҫакӑр.
Ӑшшипе вӑл вут перет
Ҫӑмӑлҫакӑн.

Прикатӑн ир-ирех
Епӗр тухнӑ.
Хавасланнӑ уй-хире
Вӑйа пухнӑ.

— Кинемейӗм, тухса кур:
Йепле епӗр—
Ӗҫре вӑйлӑн та саттур
Тӗрмешетпӗр!

---

## Каменшҫёк йурри.

Ир те каҫ
Шаккатăп кирпĕҫ,
Ир те каҫ туптатăп ҫул.
Ёҫ йурри
хастарлă,
Ҫивĕҫ,
Халь пирте салху-мĕн ҫук!..

Шак та шак!
Хуратăп кирпĕҫ
Исвĕҫпе пĕрле ҫăрса.
Ҫултанах хыватăп никĕс—
Хастарпа ҫинех тăрса.

— Пулха, пул,
Ёҫ ҫирĕп, тетĕп,
Хурҫăпа ҫулран—ванми.
Епĕ хам курсах пĕлетĕп—
Ҫурт пулат
Ёмĕр манми.

Шак та шак!..
Йанратҫке сасă,—
Хĕмленсе вĕрин ҫиҫсе.
Ёҫ йурри вĕҫетҫке кассăн,
Ҫĕр вăйра хĕрсе пиҫсе!..

* * *

— Çĕнтерӳлĕх парăр
Хулапа йала.
— Пулăшмашкăн харăс
Хатĕрех йалан!..

Çирĕп пус ес, çирĕп,
Пољшевикла çар.
Тĕпренех йăлт сирĕр
Мĕскĕн шиклăçа*...

Епĕр вăйлă, паттăр,
Нихçан усăнман—
„Пиллĕке—тăваттă"
Пирĕн лосăнках.

— Çĕнтерӳллĕх парăр
Хулапа йала.
— Пулăшмашкăн харăс
Хатĕрех йалан!

---

*) Шиклăç—хăравçă.

## Ленин.

(А. Песыменски майлă).

Ахлатрĕ çĕршывăм.
Кисренђĕ тĕнђе.
Аçа-çиçĕм çиçсе йалтăртатрĕ...

— Вилђĕ...
Вилђĕ!..
Вулккан хĕмĕнђе
Йышлă çарăм пайан тем çухатрĕ.

Тем çухатрĕ тĕнђе,
Хыпаланђĕ...
Тăвăл хыпрĕ çĕре,
Çулăм хыпрĕ.

Епĕ ыйтрăм:

— Мĕскер санăн ванђĕ?!
Çар каларĕ:
— Вулккан ђĕре хытрĕ...
Шăпăр-шăпăр куççул йухса анђĕ.
Шăпăр-шăпăр
Тумлаť ман умма.
Пуçа йăтрăм çӳле—
Йăлт хурланђăк...

Анђах,
Ленин йалавĕ çулăмпах!..
Револђутси çарĕ çаплах хастар.
Харăс-харăс хĕрсе пусăмлаççĕ.

Ленин çарĕ вутрах кăварланнă,
Ленин партти—
Çулрах,
атаманçă.

Ленин вилнĕ...
Анҫах ĕçĕ ҫĕрĕ.
Ленин ҫĕрĕ,
нихçан вилес çуккă!—
Мĕнпур пек çĕр ҫăмĕр—
Ленин çĕрĕ,
Ленин çулĕ ĕмĕр çутă!

---

# окт̆апретсен йурри.

Епӗр—ҫамрӑк паттӑрсем
Вут-хӗмре ҫуралнӑ.
Пӗҭӗк, хӗрлӗ кӑккӑрсем
Хӗвелпе ҫуталнӑ...

Анне пирӗн—вут йупа,*
Ҫиҫӗмпе кӑварлӑ...
Ҫамрӑк ҫарӑн ҫӗн тупа
Илйиҭа хастарлӑ.

Ҫут хӗьеллӗ кунсене
Аттесем туптанӑ.—
Пит хисепсӗр йунсене
Ҫӗр ҫине йухтарнӑ.

Ҫак хисепшӗн епӗр те
— „Йаԓан хатӗр“ тетпӗр,
Сунтала хӗртетпӗр.

Пӗтӗм ҫутӑ тӗнҭепе
Ҫӗнӗлле туптатпӑр.
Хурҫӑ сасӑ инҫене,
Катана сапатпӑр.

— Ҫамрӑк паттӑр, хастарлӑн
Ҫак тӗнҭешӗн ҫирӗп.
Тимӗр хурҫӑ, кӑварлан—
Пирӗнре хаԓ ирӗк.

---

*) Вут йупа тесе кунта йупа уйӑхӗнҭи революцийе калаҭӑ.

Епĕр—çамрăк паттăрсем
Вут-хĕмре çуралнă.
Пĕтĕк хĕрлĕ кăккăрсем,
Хĕвелпе çуталнă...

---

## Шкулта.

Ех, мĕнҫухлĕ, йышлă ĕмĕт.
Умра парттă, кĕнеке...
Асра ҫуккă вутлă-хĕмĕн
Ĕлĕкхи пек хĕнекен.

Ҫакăр питлĕ ҫĕн „Ҫулпуҫĕ“,
Алра руҫкă, кăранташ...
Шкул—пирĕн ҫăн ҫулпуҫĕ;
Епĕр—акнă йăранта.

Камăн ҫĕтĕк ҫĕлĕк, атă—
Илсе панă ҫĕнĕрен.
Ҫапла ҫамрăк прикатă,
Ҫапла ҫамрăк ҫĕн ĕрет!..

Шкултах та ĕҫ йăхравҫă—
Алра пуртă та сава...
Йышлă ĕмĕт—йышлăхра ҫеҫ,
Йышлăха ҫеҫ еп савап!

---

# Йĕлтĕрпе.

Тӳпе лăпкă, тĕпсĕр тарăн.
Çемçе мамăк çил лăшах.
Халӗ ăçтанха ӗăтса ларăн
Пĕр ĕммесĕр сывлăша!?

Ех, хавасла йалăм, хирĕм
Илĕртеттĕрçке пире.
Епĕр йышлăн, каçăн-ирĕн
Йĕлтĕрлетпĕр уй-хире.

Ак, анӗах-ха шкултаӗӗĕ,
Епĕр ларнă парттăра.
Халӗ отретăм хир мулкаӗĕ
Хăвалас пек кар тăрат.

Уй-хир урлă, вăрман витĕр
Прикатăн йарăнар.
Кам çунатлă, хуса çитĕр,
Уй-хир тăрăх карăнар!

Сар хĕвелĕм ихĕр кулӗӗĕ,
Сас парсамӗӗĕ уй-хире!
Ес куратăн—ĕмĕт тулӗĕ,
Хурçăлатăр ӳт-тире.

Йухӗĕ йĕлтĕр, йĕлме йĕлтĕр,
санра сывлăх, пархатар.
— Çамрăк çарăм, хатĕр, тĕл тăр,
Тăшман пур тăк—аркатар!

Ех, мĕн ҫухлĕ ҫĕн хаваслăх,
Шутламанҫҫĕ кунашкал...
... Колхос хирĕ вĕҫĕм аслă,
Ес ан ывăн, ан хашка!

Тӳпе лăпкă, тĕпсĕр тарăн.
Ҫемҫе мамăк ҫил лăшах.
Хаҫ ăҫтанха ҫăтса ларăн
Пĕр ĕммесĕр сывлăша!

---

## Ҫурхи хаваслăх.

Сар хĕвел
Хавассăн кулҕĕ.
Хаваспах ҫиҫет ҕĕрем.
Таврана хаваслăх тулҕĕ,
Шурă йур йĕрет,
йĕрет.

Ҫур кĕсли—шăнкăравлă сасă,
пĕлĕтех мана ҫĕклет,
Ҫырмана пĕр шыв ансассăн—
Вăл сана
Тулах ҕĕнет:

— Аҭа, тух тула,
Ес, Ваңҕă,
Тух, аҭа, манпа пĕрле.
Ҫурпалах сан ҕĕрӳ канĕ...
Ав, пăхха,
илем килет.

Ах, ҕăнах,
Ҕăтма пулмасҭ-тăр!
Ҫурпалах тухса ҕупап,
ҫур ҕĕри сиксен ташлатпăр—
Унпалах ална ҫупан.

Уй-хирте кăпкалнă йурĕ,
Куҫҫуҕ пек йухаҭ таҫта.



Ҫур хӗвелӗ ирӗлет те,—
—Ӗҫе харӑс килӗр, тет.

Пĕлĕтре те кайăк-хурĕ...
Кăн-кăвак тÿпе—маҫҫа.

Сĕм хура вăрман та шухă,
Кăтрине турат̆ пайан.
Ирĕкрех ҫиҫетҫке шухăш,
ҫилпелех вĕҫсе кайан.

Сар хĕвел
Хавассăн кулҫĕ.
Хаваспах ҫиҫет ҫĕрем.
Таврана хаваслăх тулҫĕ,
Ҫур ҫĕри вĕрет.
Вĕрет!

## Ҫӗнӗ хирте.

Уй-хирте хисеплӗ йурӑ,
Ҫиҫмеллех ҫиҫет ђӗрем...
Ку уй-хир ђӑнах та урӑх;
Ҫеҫкеленнӗ вар-ҫерем.

Тыр пуссийӗ анлӑ тинӗс,
Хумсемпех тӑванлӑ.
Ҫӗнӗ хирӗм йешӗл симӗс,
сарлака та анлӑ.

Тыр пуђахӗ—сарӑ пурҫӑн,
хаваспах кӗрнеклӗ.—
Тӗш пӗрђийӗ тутӑ, хурҫӑ—
Кӗмӗл шерепеллӗ.

Ир-ирех хӗвел шевлийӗ
Ҫӗн хире ђуптурӗ.
Шӑпђӑкпа тӑван хир ҫийӗ,—
Йанкӑслаттха йурӑ:

— Ех, выђа та, савӑн, ҫиҫ—
Колхосра хаљ епӗр.
„Хаваспах ӗҫле те пиҫ!“
тесе хӗпӗртетпӗр.

Пит аванҫке уй-хирте...
Лӑпкӑ ҫил ађашшӑн
Санӗ ӗҫлӗн илӗртет,
те тутах тӑвасшӑн...

## КОЛХОС ХИРНЕ.

Çил хумĕ ђупсассăн кас-кас
Çĕн хирĕн ђĕрçийĕ—сăпка.
Уй-хирĕм, санах пуђ савас,
ман алăм пĕр саншăн васкаť.

Уй-хирĕм, çут ылтăн хушпу,
Ытла та мĕн капăр ес хир...
— Ей тайăл, тыр пуçĕ, тĕш пул,
вырмашкăн тухатпăр епĕр.

Текех ес кураймăн суха,
вăл хăрнă, йăваннă килте.
Кунта хађ сан хурçă ťыха...
... Сар ылттăн тĕш тырлă кĕлте.

Отретăм сан тăрăх пайан,
Колхосшăн çĕн йурă вĕçлет.
Шанатпăр—тек шăтмĕ мăйан,
Кунта хађ машшинă ĕçлет.

* * *

Йăл кулан сап-сар хĕвелĕ
Укаланнă пайан ир...
Ку çĕршыв хисеп тĕпелĕ,
Йешĕл тумлă çĕн уй-хир.

Колхос хирĕ çеçкеленнĕ,
Ылттăнран тырри-пулли.
Тавраллах çĕн сас çĕкленнĕ,
Кăкăр хавас тулли.
Ех уй-хир, вĕретçке йунăм,
Саншăнах çиçет ђĕрем,—
Саншăнах хыптарнă çулăм
Алсене хĕрӳ ĕçре.
Ир тăрсан та машшин шавĕ
Ĕçпеле хавас кулма!
Ĕç йуррийĕ—кăмăл тăвĕ—
хушатĕ çирĕпрех пулма...

---

**вăрманта.**

Кассăн килнĕ вăштăр çилĕ
хумхантарҕĕ ҕăрăша...
— Кунта çуккă мăштăртиллĕх,
кашни харăс тăрăшар!

Урлă пăҕăк, пуртă савăл—
алла хытă ҕăмăртар.
Кам хастарлă, аҭа, савăн,
прикатăн ăмăртар.

Лавăн-лавăн шурă шертĕ,
Лавăн шунă хыр каска.
Вуннăн, аллăн, тен çĕрщер те...
Йышлă çарăм хыт васкаҭ.

Аҭа, ÿпĕн ăвăс, ҕăрăш,
Упĕн хăвăрт васкарах,
Ей, утарнĕк, тăрăш, тăрăш,
Ан çухат ес хастара!

Вăш-вăш-вăш вĕретçке ăшшăн,
лăпкă çил аҫашшăн.
Тепĕр вăхăт хушшăн-хушшăн
санах ыталасшăн,

Ту-ту-ту-у! улати туткă,—
Епĕр харăс хатĕр
— Пирĕнте салху мĕн çуккă,
Аҭăр,
аҭăр,
аҭăр!

— Аҭăр, тухăр ущкăнпех,
вăрмана тухатпăр,
Пайан кунĕ-кунĕпех
сывлăшра йухатпăр!

Пĕр самантлăх парапан
сывлăша хумхатрĕ.
Пăнтăр-пăнтăр тара-там,
шăплăха çухатрĕ...

Ех, мĕн ҫухлĕ, ушкăн-ушкăн
Аҫасем утаççĕ.
Хаваспа ĕçе тухмашкăн
йурăсем йурлаççĕ.

— Епĕр—хапрăк-колхосран,
Лакĕре килейнĕ.



Пирӗнте салху мӗн ҫукка,
— Аҫӑр, аҫӑр, аҫӑр!..

Çак кĕрлевлĕ пурнăçран—
хастара илейнĕ...

Хĕрӳ ĕçшĕн çулăмпа
йалавсем хĕрелнĕ.
Хĕрӳ ĕçшĕн хыпăнма
Илйиҫран вĕреннĕ.

Атăр, тухăр ушкăнпех,
Вăрмана тухатпăр.
Пайан кунĕ-кунĕпех
сывлăшра йухатпăр...

Çакăн пек пайан вăрман
ĕçлĕ йурă çăтрĕ.
Ҫӳхенмесĕр ват йуман
темле хăй те ҫăтрĕ.

**уйавра.**

Тăр-тăр-тăр-р! ђĕтренђĕ кассăн
Парапан кĕвви ирпе.
Тăр-тăр-тăр-р ђўхенђĕ сасă
Колхосри тăван хирте...

Мĕнпур пек ĕççынĕ тухнă,
хĕрў ĕç унпах, пĕрле...
Ĕçри вăй тара та ухнă—
уйавра пайан кĕрлет.

Хĕвел пек çунаççĕ ђакăр
пионер мăйсем—кăвар.
Ку çĕршыв илемлĕ ђатăр,
ун сăвви:—комуни тăвар!

Вут-хĕмпе хĕмленнĕ ĕмĕр
Вăл йалан хĕрў ĕçрех.
— Ей, ĕçлер, ĕçлерха, тетпĕр.
Ĕçшĕнех çунаť ђĕрем...

Ђанкки-ђан! сапатпăр епĕр
Вуђахри хĕме сирсе.
— Çамрăк çап, хастарлăн, тетпĕр—
хĕнхура тĕпрен хирсе.

## хĕрлĕ кун.

Авкустăн 1-мĕшне.

Сахали шăл йĕрнĕ хисепсĕр шур йытă
Сахали хăйраççĕ йун сăхнă çĕççе?!.
Ир-каçăн йунаççĕ;
Ђул ђăмăр пит хытă,
Хаљ хатĕр вĕсем тытмашкăн
Йунланнă çĕççе.

Йунаççĕ,
Йунаççĕ йунланнă алсем.
Çак ирĕк çĕршывăн
Çĕн ђатăр тумне
Çурасшăн,
Ватасшăн
Пĕр ђапсăр халсем...
Ђăнкă шăтăк тăвасшăн
Ĕçхалăх умне.

Йаппони,
Иттали,
йе Çурçĕр Амерĕк.
Фашшисăм ђĕрийĕ—
Ак Пољышшă, Румыни...
Сахали çаксенĕн хĕм-терĕ хĕрмерĕ,
Сахали тулмарĕ
Франтси тĕрми...

Ан аскăн, ђураллăх,
ылханлăх тĕнђийĕ,
Ан аскăн,
туласшăн кранитлă çĕре!..
Куратни,
Хĕмленнĕ утарлă çĕр çийĕ,—
Куратни хĕмленнĕ
Мĕлйунлă ђĕре!

Пĕр харăс калатпăр:
— Ан çулăх, шур йытă,
тытсассăн арканăн
пин-пинлĕ çĕре!

---

# ТУПМАЛЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Октăпĕр маршĕ | 1 |
| * * * | 6 |
| * * * | 9 |
| Супотнĕк йурри | 12 |
| Камĕншдĕк йурри | 14 |
| * * * | 15 |
| Ленин | 16 |
| Октăпретсен йурри | 18 |
| Шкулта | 20 |
| Йĕлтĕрпе | 21 |
| Çурхи хаваслăх | 23 |
| Çĕнĕ хирте | 26 |
| Колхос хирне | 27 |
| Вăрманта | 29 |
| Лакĕрте | 30 |
| Уйавра | 33 |
| Хĕрлĕ кун | 34 |



Послано в производство 21-III-32 г.
Подписано к печати 3-IV-32 г.
Редактор Г. Краснов.
Тех. редактор Степанов Н. С.

Раз. Чувашлита № 1377. Заказ 526 Тираж 5100 экз.

Чувашгиз № 89. Ст. ф. Б 130×180 Об'ем 1 п. л.

Цена 25 коп.
Хакĕ 25 пус

Х—1

**М. НЯМАНЬ. БОДРОСТЬ**

ЧУВАШГОСИЗДАТ 1932 ЧЕБОКСАРЫ